# Композитора асӑнса

***Наци библиотекин «Мерчен» музыка тӗпелӗнче «Филипп Лукин – юрӑ лирикин ӑсти» каҫ иртнӗ.***

Ӑна паллӑ композитор ҫуралнӑранпа 105 ҫул ҫитнине халалланӑ. Библиотека ӗҫченӗ Вера Архипова пӗлтернӗ тӑрӑх – уява Шупашкарти «Классика» капеллин хорӗпе солисчӗсем, Ф.Лукин ячӗллӗ музыка шкулӗн вӗренекенӗсемпе преподавателӗсем композиторӑн хайлавӗсене шӑрантарнӑ. Асӑну каҫне пухӑннӑ ӳнер ҫыннисем композитора ӑшшӑн аса илнӗ, ун пурнӑҫӗнчи хӑш-пӗр саманчӗ пирки каласа кӑтартнӑ.

Ҫав кунах библиотекӑра «Филипп Лукин – чӑваш вокал музыкин корифейӗ» электронлӑ кӑларӑмне презентацилленӗ. Композитора асӑнса республикӑри тӗрлӗ районпа хулара уяв каҫӗсем, наукӑпа практика конференцийӗсем, концертсем, фестивальсемпе конкурссем иртеҫҫӗ.